Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

68 (7385) № ✻ Юн кун, 2006 ҫулхи августӑн (ҫурла) 16-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Вырма – 2006

## Президент стипендиачӗ шанӑҫа тӳрре кӑларать



"Хирти пӳлмери мар",– тет хӑйӗн ӗҫне ҫиччӗ виҫсе пурнӑҫлама хӑнӑхнӑ чӑваш хресченӗ. Ҫак чӑнлӑха асра тытса паян пӗтӗм район уяр кунӑн кашни минучӗпе туллин усӑ курса хирти тырӑна ампара кӗртсе хурассипе тимлет. Ку тӑрӑшулӑха "Лидер" агрофирма ӗҫченӗсем те иккӗмӗш вырӑна хӑвармаҫҫӗ. "Хир карапӗсем" ҫӗнӗ тырӑна пуҫтарса кайнӑ хыҫҫӑн та уйхирте ӗҫ шавӗ лӑпланмасть: механизаторсемпе уй-хир ӗҫченӗсем ҫийӗнчех улӑм пухса тирпейлес ӗҫе кӳлӗнеҫҫӗ. Тӗрӗсрех калас пулсан, хуҫалӑхра улӑма пӗтӗмпех рулонлӑ пресспа пуҫтарассине йӗркеленӗ. Апла пулсан механизаторсен ответлӑхӗ пысӑк. Ҫакна 6-мӗш ҫул МТЗ-80 тракторпа ӗҫлекен Александр Николаевич Александров та (сӑн ӳкерчӗкре) лайӑх ӑнланать. Ахальтен-им кӑҫал вӑл ЧР Президенчӗн стипендиачӗ.

– Ҫак пысӑк хисепе тӳрре кӑларасси паянхи манӑн тӗллев,– тет ӗҫрен нихӑҫан та хӑраман Саша, механизатор ӗҫне ашшӗн тӗслӗхӗ алла илме пулӑшнине палӑртса. Сӑмах май, Николай Витальевич тӑван хуҫалӑхра чӗрӗк ӗмӗр трактористра вӑй хурать. Паян унпа юнашар ӗҫе тӑнӑ ывӑлӗ те ӗҫрен ютшӑнманни ветерана савӑнтарать кӑна. Саша вара ҫамрӑклӑха пӑхмасӑрах хӑйӗн ӗҫӗнче чӑн-чӑн маттур. Ҫакна унӑн ӗҫ кӑтартӑвӗсем те ҫирӗплетеҫҫӗ. Кӑҫалхи ҫур акире, акӑ, ҫамрӑк механизатор 485 гектар тырӑ акнӑ, утҫи пуҫлансан – 1230 рулон утӑ пресланӑ, паян вара вырмара пӗччене улӑм преслать. Ҫав хушӑрах иртнӗ ҫумӑрлӑ кунсенче кӗр акине хатӗрленсе ака агрегатне юсарӗ.

А. Александров пек пултаруллӑ ҫамрӑксем ял хуҫалӑхӗнче ӗҫленӗ чух тата РФ Президенчӗ ял хуҫалӑх тӗлӗшпе те наци проектне вӑя кӗртнӗ самантра ял хуҫалӑхӗн малашлӑхӗ пурри никама та иккӗлентермест.

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗсем.**



## Алла ҫӑкӑр тытсан ҫеҫ ҫӑкӑр аса ан килтӗр



*Юлашки кунсенчи ҫумӑрсем хресченӗн вырмари хӗрӳлӗхне чакарчӗҫ. Анчах ҫӗр ӗҫченӗ ҫак тӑхтавра та умри ӗҫсене хӑвӑртрах ирттерсе ӳстернӗ тырӑна ҫухатусемсӗр кӗлете хурас тӗллевлӗ. Ҫак шухӑшпах вӑл ҫанталӑк май панӑ вӑхӑтпа техникӑна пӑхса илет, кӗр аки шухӑшӗсене хӑй чӗри витӗр кӑларать.*

*"Волга" чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑн кӑҫалхи вырмара тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене пӗтӗмпе 435 гектар ҫинчен вырса пухса кӗртмелле. Ҫак ӗҫе хуҫалӑх икӗ "хир карапне" хутшӑнтарать. Комбайнерсемпе водительсен тимлӗхӗпе кӗске хушӑрах кӗрхи культурӑсемпе пӑрҫана вырса йӗтем ҫине кӗртме май килнӗ. Халӗ талӑкӗпех вӗсене аласа типӗтес ӗҫсем пыраҫҫӗ.*

*Ӗнерхи кун тӗлне хуҫалӑхра тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене 110 гектар ҫинчен (25 процент) вырса ҫапса кӗртнӗ. Механизаторсемпе уй-хир бригадин ӗҫченӗсем "хир карапӗсем" хыҫҫӑнах улӑма пуҫтарса хурассипе тимлеҫҫӗ. Ҫумӑрсемччен вӗсем ку ӗҫе вуншар гектар ҫинче пурнӑҫлама ӗлкӗрнӗ те.*

*Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан Галина Петровна Архипова 5-мӗш ҫул ӗнтӗ уй-хир бригадине ертсе пырать. Унӑн ӗҫченӗсем паян уй-хирти улӑма пуҫтарассипе, йӗтем ҫине пынӑ ҫӗнӗ тырӑна аласа типӗтсе ампара хурассипе малти вырӑнта.*

*Алла ҫӑкӑр тытсан ҫеҫ ҫӑкӑр аса ан килтӗр тесе тимлеҫҫӗ паян "Волга" хуҫалӑх ӗҫченӗсем.*

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Ӗҫ ҫи – 2006

**РАЙОНТИ ХУҪАЛӐХСЕНЧЕ ТӖШ ТЫРӐПА ПӐРҪА ЙЫШШИ КУЛЬТУРӐСЕНЕ ПУХСА КӖРТЕС, КӖР АКИ ВАЛЛИ ҪӖР ХАТӖРЛЕС ӖҪСЕМ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТНИ**

**Цифрӑсен колонкисенче: 1. Тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсем ҫулнӑ тата вырнӑ. 2. Кӗрхи культурӑсем акма ҫӗр хатӗрленӗ (августӑн 15-мӗшӗ тӗлне, процентпа).**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 2 | 71 |
| "Волга" | 25 | 100 |
| "Восток» | 28 | 69 |
| «Герой" | 39 | 8 |
| ЗАО "Агро-Урожай" | 82 | 0 |
| К. Иванов яч. хис. | 21 | 52 |
| Ильич яч. хис. | 35 | 80 |
| "Колос" | 0 | 60 |
| Ленин яч. хис. | 2 | 73 |
| "Лидер" | 7 | 28 |
| "Нива" | 29 | 5 |
| "Оринино" | 41 | 26 |
| "Передовик" | 11 | 94 |
| "Свобода" | 33 | 23 |
| "Сеятель" | 0 | 0 |
| Суворов яч. хис. | 25 | 76 |
| ООО АФ "Рассвет" | 19 | 83 |
| ОАО АФ "Нива" | 0 | 0 |
| "Ударник" | 23 | 70 |
| "Хлебороб" | 12 | 67 |
| Чапаев яч. хис. | 16 | 100 |
| «Чемеево» | 16 | 7 |
| Чкалов яч. хис. | 4 | 120 |
| **Районӗпе** | **19** | **60** |

**Районти хуҫалӑхсенче вырма ӗҫӗсем сарӑлса пыраҫҫӗ. Ӗнерхи кун тӗлне тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене 3247 гектар ҫинче ҫулнӑ тата вырнӑ. Ку вӑл планпа пӑхнин 19 проценчӗ пулать. Ҫав вӑхӑтрах Е. Андреев яч. хис., «Колос», «Сеятель» хуҫалӑхсенче, «Нива» агрофирмӑра вырма ӗҫӗсем халӗ те пуҫланман.**

**Кӗрхи культурӑсенчен тулӑна 862 гектар ҫинчен (78 процент), ыраша 451 гектар ҫинчен (50 процент) пухса кӗртнӗ.**

**«Агро-Урожай», К. Иванов яч. хис., «Хлебороб» хуҫалӑхсенче ҫурхи тулӑ, «Волга», «Герой», Ильич яч. хис., «Чемеево» хуҫалӑхсенче пӑрҫа ҫапса тӗшӗленӗ.**

**Улӑма 1371 гектар ҫинчен (вырса ҫапнин 43 проценчӗ) пухса тирпейленӗ. «Восток», «Свобода» хуҫалӑхсенче ку ӗҫе аван йӗркеленӗ.**

**Выльӑхсем валли апат хатӗрлес ӗҫсем пыраҫҫӗ. Ӗнерхи кун тӗлне нумай ҫул ӳсекен курӑксене 10442 гектар ҫинче (95 процент), пӗр ҫул ӳсекен курӑксене 1358 гектар ҫинче (77 процент) ҫулнӑ. Утӑ планпа пӑхнин 69 проценчӗ чухлӗ (8758 тонна), сенаж 95 процент (23946 тонна), силос 54 процент (11331 тонна) хатӗрленӗ.**

Камӑн сӑвӑм пысӑкрах?

**РАЙОНТИ ХУҪАЛӐХСЕНЧЕ КӐҪАЛХИ АВГУСТӐН 14-МӖШӖНЧЕ КАШНИ ӖНЕРЕН СӖТ ВӐТАМРАН МӖН ЧУХЛӖ СУСА ИЛНИНЕ КӐТАРТНИ**

**Цифрӑсен колонкисенче: 1. Кашни ӗне пуҫне сӗт сунӑ. 2. Иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑтра сунӑ (килогрампа).**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 9,2 | 8,8 |
| «Волга» | 11,0 | 18,5 |
| «Восток» | 10,9 | 10,2 |
| «Герой» | 15,7 | 10,7 |
| К. Иванов яч. хис. | 7,7 | 7,1 |
| Ильич яч. хис. | 13,1 | 11,4 |
| Ленин яч. хис. | 10,8 | 10,5 |
| «Лидер» | 16,8 | 17,7 |
| «Нива» | 12,4 | 13,5 |
| «Оринино» | 10,4 | 13,2 |
| «Передовик» | 9,4 | 10,3 |
| «Свобода» | 12,8 | 12,6 |
| «Сеятель» | 6,0 | 7,0 |
| Суворов яч. хис. | 12,8 | 12,3 |
| ООО АФ "Рассвет" | 9,7 | 10,9 |
| «Ударник» | 13,6 | 14,2 |
| «Хлебороб» | 9,8 | 8,5 |
| Чапаев яч. хис. | 8,6 | 8,6 |
| «Чемеево» | 12,6 | 8,8 |
| Чкалов яч. хис. | 11,8 | 8,6 |
| КФХ Михайлов А.Н. | 10,0 | 9,2 |
| Районӗпе | 11,6 | 11,1 |

Октябрӗн 8-мӗшӗнче – ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗсен суйлавӗ

## В.Г. Данилов кандидатурине регистрациленӗ

ЧР тӑваттӑмӗш суйлаври Патшалӑх Канашӗн депутачӗсене пӗр мандатлӑ суйлав округӗпе суйлассипе ӗҫлекен 8 № Муркаш суйлав округӗн суйлав комиссийӗ ЧР Патшалӑх Канашӗн депутатне суйлама тӑратнӑ **Владислав Григорьевич Данилов** кандидатурине регистрациленӗ.

В.Г. Данилов 1953 ҫулта ҫуралнӑ, Муркаш районӗнчи Мӑн Токшик ялӗнче пурӑнать, «Муркаш районӗнчи тӗп больница» муниципаллӑ сывлӑха сыхлас ӗҫ учрежденийӗн тӗп врачӗ пулса ӗҫлет, кандидата пӗтӗм Раҫҫейри «Пӗрлӗхлӗ Раҫҫей» политика партийӗн Чӑваш Республикинчи регион уйрӑмӗ тӑратнӑ. В.Г. Данилов кандидатурине 2006 ҫулхи августӑн 14-мӗшӗнче регистрациленӗ.

Кӗр аки ыйтӑвӗсемпе

## Ака ӗҫӗсем ирттерме вӑхӑт

Эпӗ ас тӑвасса, кӗрхи культурӑсене эпир августӑн 15-мӗшӗнче акма пуҫланӑ та уйӑх вӗҫлениччен акса пӗтернӗ. Халӗ вара пачах урӑхла пулса пырать. Сентябрь уйӑхӗн 10-мӗшне ҫитсен те хуҫалӑхсенче кӗр аки вӗҫленмест. Никамшӑн та вӑрттӑнлӑх мар, вӑхӑтра акса хӑварманнипе кӗрхи культурӑсен тымарӗсем хӗл каҫма кирлӗ пек аталанса ҫирӗпленсе юлаймаҫҫӗ. Кӗрхи культурӑсем хӗл кунӗсенче шӑнса пӑсӑлнин сӑлтавӗ ҫакӑнта кӑна тесе шутлатӑп. Ҫавӑнпа та кӗр аки ӗҫӗсене вӑхӑтра туса ирттересчӗ.

**В. ИВАНОВ.**

Кашмаш ялӗ.

Демографиллӗ лару-тӑру

## Ырри ытларах пултӑр

Августа кӗтӗмӗр. Кӑҫалхи 7 уйӑхра вара пирӗн районта 215 ача ҫуралнӑ. Пӗлтӗр ку вӑхӑтра 4-ӑн ытларах ҫуралнӑччӗ. Муркаш, Москакасси ял тӑрӑхӗсенче вара ҫӗн кайӑксен сасси ытларах илтӗнет: 23-шер ача ҫуралнӑ кунта.

Шел пулин те, пурнӑҫран уйрӑлакансен йышӗ кӑҫал пӗлтӗрхинчен нумайрах: 412ӗн. Пӗлтӗр 379 ҫыннӑн кунҫулӗ татӑлнӑччӗ.

Пурӑнакан вара малаллах пӑхать. Кӑҫал ҫулталӑк пуҫланнӑранпа 1 ҫемье ытларах ҫуралчӗ. Иртнӗ ҫул ҫак хушӑра 98 яшпа хӗр пӗрлешнӗ пулсан, кӑҫал 99 мӑшӑр сылтӑм алла ылтӑн ҫӗрӗ тӑхӑнчӗ. Москакасси ял тӑрӑхӗнче ҫак хушӑра 11, Турай ял тӑрӑхӗнче 10 туй кӗрлерӗ.

Туй кӗпи тӑхӑннӑ чух ҫак телее хамӑр ӗмӗр-ӗмӗр упрассӑн туйӑнать. Ҫапла тума тӑрӑшать кашниех. Анчах та 38 мӑшӑрӑн ҫак ӗмӗнчӗ сӳнчӗ кӑҫал. Шӑп ҫакӑн чухлӗ ҫемье арканчӗ ҫак хушӑра.

Мӗн тесен те, пурнӑҫӑр телейлӗ те ҫутӑ пултӑр.

Юбилей

## *Саламлатпӑр*



Хаклӑран та хаклӑ, юратнӑ мӑшӑра, еннене, кукамая, аппана - Чуманкасси ялӗнче пурӑнакан **Зоя Поликарповна РОМАНОВАНА** сумлӑ юбилей ячӗпе чун-чӗререн пуҫ тайса, хисеплесе чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр.

Эсӗ Чуманкасси ҫыхӑну уйрӑмӗнче нумай ҫул тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлесе сӑпайлӑхупа, хастарлӑхупа палӑртӑн.

Эпир сана пурнӑҫ ҫулӗпе утма ҫирӗп сывлӑх, телейлӗ те такӑр кун-ҫул, ҫӑл куҫ пек тапакан вӑй-хал сунатпӑр. Ҫемьере яланах килӗшӳ, тулӑх пурнӑҫ пултӑр. Мӗн ӗмӗтленни яланах пурнӑҫлантӑр. Сӗтелӳ ҫӑкӑр-тӑвартан, кӗрекӳ тӑванусенчен, тус-юлташран ан татӑлтӑр. Эпир санпа мухтанатпӑр, эс пурришӗн савӑнатпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, хӗрӗсем, кӗрӳшӗсем, мӑнукӗсем, йӑмӑкӗсемпе шӑллӗсен ҫемйисем, хӑтисемпе тӑхлачисем.**



Хаклӑран та хаклӑ ҫыннӑмӑра, юратнӑ мӑшӑра,аттене, асаттене, кукаҫине Мӑн Шашкар ялӗнче пурӑнакан **Владимир Васильевич МЕРЛОВА** 55 ҫул тултарнӑ ятпа пур ырӑ кӑмӑлтан саламлатпӑр. Эпир сана чун-чӗререн юрататпӑр, санпа мухтанатпӑр, эс пурришӗн савӑнатпӑр. Утас кун-ҫулу такӑр, ӗмӗрӳ вӑрӑм, сывлӑху ҫирӗп, пурнӑҫу тулӑх пултӑр.

**Салампа: мӑшӑрӗ, ывӑлӗпе хӗрӗ, кинӗ, 4 мӑнукӗ.**

Ҫырӑнтару-2007

**Хаклӑ вулакансем! Районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата ҫитес ҫулхи пӗрремӗш ҫур ҫулта илсе тӑма ҫырӑнтарма пуҫланӑ. Ҫитменнине августӑн 31-мӗшӗччен унччен хи хакпах ҫырӑнма май пур. Апла пулсан ҫӑмӑллӑхпа усӑ курма, район хаҫатне вӑхӑтра ҫырӑнса илме тӑрӑшӑр.**

**Хаҫат редакцийӗ.**